Ҫапла вара пичетленӗ ҫӗнӗ правилесен тӗп шухӑшӗ ҫакӑнта:

1) Чӑваш алфавитне ҫитӗмсем (ҫӳлте асӑннӑ) вырӑс саспаллисем вӗртмелеҫ (Щ, Ъ, Ь, Э, Ю, Я);

2) Вырӑс чӗлхи урӑл чӑваш чӗлхине кӳсӳ вырӑсла тата интернационалӑл сӑмахсене вырӑсла грамфикпах ҫыракан т. ыт. чӗлхе.

Ҫак правилисене сӳтсе-явнӑ май хӑшпӗр йӳлташсем асӑнна ҫӗнӗ саспаллисене кӗртеесинне хирӗҫ пулчӗҫ. Пурин-чен ытла Я, Э, Ю саспаллисене хирӗҫ харкашрӗҫ. Вӗсем ҫапла шутлаҫҫе: чӑваш алфавитенче ю, я саспаллисем кирлӗ мар, мӗншӗн тесӗн вӗсем икӗ сасӑран пулнӑ, тесҫе (йа—я, йу—ю). Вара часах нимӗҫ ӗе Европӑри ытти халӑх чӗлхисем ҫине тӗллесе кӑтартаҫҫе. Нимӗҫ ӗе ытти йӳт сӗршыв чӗлхисем ҫине тӗллеме йуратаканскенчен ыйтас килет: чӑваш культури вырӑссен социализмла культурипе пӗр йӑвара-ши, ӗе буржуала нимӗҫ культурипе пӗр йӑвара-ши? Ыйтӑва ҫапла лартсан хирӗҫ мӗн калама пӗлеҫҫи пирӗн противниксем?

Теприсем ҫапла калаҫҫе: вӑл ҫӗнӗ саспаллисене кӗртсен алфавит пит пысӑкланса кайаҫ, вӑл пур ӗенчен те чӑрмантарӑҫ, тесҫе. Чӑнахах та ҫӗнӗ алфавитпа саспаллисем нумай (39), анчах пирӗн ҫӗршывра пурӑнакан халӑхсен 47 саспаллине ситекен алфавит та пуррӗке.

Октябрь революци хыҫҫӑн тин алфавит тунӑ халӑхсен пурин те алфавитпа 30—40 саспаллирен кайи ҫук. Сӑмах май ҫакна та калас пулаҫ. Алфавитри саспаллисене чакарасси ҫинчен шутлас пулсан, вырӑс саспаллисене кӑларса пӑрахас ӗе хамӑр алфавита кӗртес мар ӗенӗпе мар, ҫ, ӑ, ӗ, ӳ, ӑ, ӳ хӳрисемпе тӑрризене пӗтересе йӗнӗпе каймала.

Ку майпи пирки малалла тӑрӑнрахан шутласа пӑхас пулаҫ пирӗн шутпа.

Хӑшесем тата типографи йӑвӑрлӑхӗсем ҫине кӑтартаҫҫе. Пирӗн линотипсене ӳлӗттермала пулаҫ, ӑна тума пултарайманстӑр епле, тесҫе. Ку шухӑш тӗрӗс марри ӳсӑмах палла. Пирӗн шутпа—епӗр мар техникӑшӑн, техника хӑй пирӗншӗн. Полиграфпромышленность ӗнтӗ ҫӳле правилисене йусас ӗҫе хай ҫине илмӗ...

Паллах ӗнтӗ, правилисен проектне епӗр пур ӗенчен те ыйтусене тӗплӗн татса парат, тесе шутламастӑр. Петӗмпех урӑхла, хӑшпӗр ыйтусенче татса парайман выраснем, ӗе хирӗҫҫем тата тӗрӗлерен кӑлтӑксем пулма пултараҫҫех. Ҫав кӑлтӑксене пӗтересе шутпа, тата выраннӑ работниксене: учительсен, журналиссен, студентсен, колхозниксен, рабочисен, профсоюз членӗсен, комсомол, парти членӗсен шухӑшне пӗлсе, правилисене тӳрлетес ӗҫе ҫук курас шутпа проекта пичетленӗ те.

Ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулӗ инҫе мар. Унччен ҫӗнӗ проекта ҫирӗплетесе унпа усӑ курмала тӑвас пулаҫ.

И. Яковлев.

РЕДАКЦИРЕН: И. Йӑкӑвлӗв йӳлташ статйине сӳтсе-явас майпа, вӑл хӑй ҫӗнӗ орфографи проекчӗ тӑрӑх сырнипех, пичетлетпӗр.

„Чӑваш Коммунӗн" енерхи номӗрӗнче пичетленӗ "Чӑваш орфографин тӗп правилисен" проекчӗ Культурӑн ӑслӑлӑхпа тӗнчев институчӗ хатӗрленӗ. ПСК(б)П Обкомӗ ку проекта сӳтсе-явма пичетлесе кӑларма решени йышӑннӑ.

Редакци „Чӑваш Коммунӗ" хаҫата вулакансене пирне те „Чӑваш орфографин тӗп правилисене сӳтсе-явнӑ ҫӗре хутшӑнма чӗнет. Статйасене ҫырусене редакцине йе ӑслӑлӑхпа тӗнчев институчӗ йамала.

Газогенератӑрлӑ автомобилсӗн пысӑк чупӑрӗ

Йӳлӗн 1-мӗшӗнче Мускавран грузсем туртармали газогенератӑрлӑ 12 автомобиль пысӑк чупава тухса кайнӑ. Вӗсенчен вуннӑшне йӑваҫ ҫунтарса, иккӗшне йӑваҫ кӑмӑкӗ ҫунтарса ӗҫлеттереҫҫе.

Машинсем Москав — Омск — Ленинград—Минск— Киӗв—Москав маршрутпа вуҫа пин километр чупса иртмелеҫ.

Чупу тӗллевӗ—газогенератӑрлӑ авомобилсем мӗн тери лайӑх ӗҫлеме пултарнине тата вӗсем тӗрлӗ условиле ҫул йӗрсем ҫинче мӗн тери шанчӑкла иккенине палӑртасси пулаҫ.

Чупу утмал кун хушшинче пӗтмелеҫ.

(ТАСС).

Йӳлӗн 15-мӗшӗнче—Казах ССР Верховнӑй Совечӗн пӗрремӗш ҫеҫсийӗ пулаҫ

АЛМА-АТА, йӳлӗн 1-мӗш. (ТАСС). Казах СС Республикинӗн Ӗҫтӑвакан Тӗп Комитет Президиумӗ Казах ССР Конституцийӗн 37-мӗш статйи тӑрӑх Казах ССР Верховнӑй Совечӗн пӗрремӗш ҫеҫсине 1938 ҫулхи йӳлӗн 15-мӗшӗнче Алма-Ата хулинче пухма йышӑннӑ.

Кӗрхи тула выраҫҫӗ

Краснодар крайӗнче пӗрчӗлӗ тырӑсене пухса кӗртес ӗҫ пуҫланнӑ. Кӗрхи урпана пур ҫӗрте те тенӗ пекех пухса кӗртнӗ. Тимашевски, Марйански тата ытти районсенчи колхозсем те кӗрхи тулана пухса кӗртме тытӑннӑ.

(ТАСС).

Государствӑна тырӑ пама пуслана

Днепропетровск облаҫӗнчи кантӑр йӗнчи колхозсем государствӑна тырӑ пама пуслана. Генически-районӗнчи „Красный Чангар" колхоз елеватӑра 68 центнер кӗрхи урпа панӑ, Акимӑвски районӗнчи „Единый труд" колхоз—каҫал пухса илнӗ кӗрхи тулӑна 8 центнер панӑ. Тӗштӑр пахалӑхӗ пит те лайӑх.

(ТАСС).

Кӗрхи тӗштырӑ культурисене имҫамсемпе чӳхесси

Сойузӑн Ҫӗрҫӳ Халӑх Комиссариачӗ 1938 ҫулхи кӗркаль вӑлӑн тӗштырӑ культурисене имҫамсемпе чӳхемели план туса ҫирӗплетнӗ. Ҫӗрҫӳ Халӑх Комиссариачӗн ҫиҫтемине кӗрекен колхозсене совхозсене кӗрхи тулӑ вӑрлӑхӗнче 1.839,2 пин тонна имҫамсемпе чӳхемеле, кӗрхи ыраш вӑрлӑхӗнче 2.706,9 пин тонна, кӗрхи урпа вӑрлӑхӗнче—83,1 пин тонна.

Селекцине станцисенче, районсенчи вӑрлӑ тӑвакан хуҫалӑхсенче тата колхозсемпе совхозсенче акмали тулӑ вӑрлӑхӗсене формалинпа чӳхеҫҫе, туна вутпуссийӗ йӗрне тулӑ вӑрлӑхӗсене,—пур ҫӗрте те чӳхеҫҫе. Тулӑн ытти вӑрлӑхӗсене, ҫаван пекех тата ыраша та, типе мелсемпе имҫамлас пулаҫ.

Имҫамсемпе чӳхемен вӑрлӑхсемпе акма чарассе.

(ТАСС).

Ӗҫсынниссем перекетленӗ уҫка-тенкӗ ӳссе пыни

Сталинла пилӗкҫуллӑхсенче перекет кассисенче тытса усракан уҫка-тенкесен хисепӗ ҫирӗм хут ытла ӳснӗ. Уйӑрмах перекетленӗ уҫка-тенкӗсен хисепӗ ҫак ҫулта пысӑкран ӳснӗ. Хальхи вӑхӑтра вӗсем 5 мӗлӑрд та 895,5 мӗлйӑн тенкӗ шутланаҫҫе.

Колхозлӑ йӑлсем перекетленӗсем 1938 ҫулта пилӗк уйӑх та 12 кун хушшинче 192,7 мӗлйӑн тенкӗ чухле ӳснӗ.

Совет перекет кассисенче 14 мӗлйӑн вкладчик ытла шутланса тӑрат.

(ТАСС).

Финанс ҫекцисем аван ӗҫлеҫҫӗ

ТАВАЙ. Районта пур йӑлсовечсен ҫумӗнче те финанс ҫекцисем пур. Ҫекцисен ӗҫне Ҫӗнӗ Пушкӑ Тавӑрас Нарвашӑ йӑлсовечӗсенче лайӑх йӗркеленӗ.

Пӗтӗм ӗҫсыннин чапла праҫникне—йӳлӗн 26-мӗш кунне—ҫак йӑлсоветсем хуҫалӑхла-политикӑлла ӗҫре пысӑк ҫитӗнӳсем тунине кӗтсе илчӗҫ. Укҫа-тенкӗ пухассин иккӗмӗш кварталӗ—планне йӳлӗн 26-мӗшне Ҫӗнӗ Йышӳпе 147,1 процент, Вырӑс Нарвашӑ 118 процен тултарчӗҫ.

Вл. Борисов.

Пирӗн ҫӗршыв ҫӗнтерӳлӗ

САВАЛКАССИ (телефон тӑрӑх). Савалкассинче (Вӑрнар р-нӗ) йӳлӗн 30-мӗшӗнче коммуниссемпе партире тӑманнисен блокӗн ҫӗнтерӳне йаттнӑ митинг пулса иртрӗ.

Митингра 300 ҫын ытла йышӑҫ. Сергейӗв, Игорав, Зайцев, Шишкин йӳлташсем хавхаланулӑ сӑмахсем тухса калареҫ.

Туҫи Мӑртӑн ячӗллӗ колхозник Игорав хӑйӗн сӑмахӗнче ҫапла каларӗ:

— Епӗр коммуниссемпе партире тӑманнисен блокӗн кандидачӗсем-шӗн сасӑласа телейлӗ пурӑнӑҫшӑн сасӑларӑмӑр. Мӗншӗн тесен, епӗр палӑртнӑ кандидатсем—халӑхӑн чи шанчӑклӑ ывӑлҫем, хӑйсен пултарулӑхне ӗҫре кӑтартнӑ ҫынсем. Епӗ хамӑн сассӑма пире телейлӗ те савӑнӑҫла пурнӑҫ туса паракан Сталинӑн шанчӑклӑ соратникӗшӗн—М. И. Калинин йӳлташӑн панӑшӑн вӗсемсӗр савӑнтӑн. Сывӑ пултӑр коммуниссемпе партире тӑманнисен никам ҫӗнеймӗн блокӗ! Сывӑ пултӑр аслӑ суйлус Сталин йӳлташ!

**

МУЧАР (Тавай р., телефонпа). Йӳлӗн 26-мӗшӗнче коммуниссемпе партире тӑманнисен блокӗ чаплӑ ҫӗнтерӳ туни Мучар суйлав округӗнчи суйлавҫӑсен хастарлӑхне тата хӑпартӗ. РСФСР тата ТАССР Верховнӑй Совечӗсен суйлавӗсен итогӗ ӗнчӗпе йӳлӗн 28-мӗшӗнче Мучарта 730 ҫынла митинг пулчӗ. Митингра суйлавҫӑсем тухса калареҫ, унтан Воронилав йӳлташ патне садамла ҫыру ӑнма йышӑнчӗҫ.

Халӑх ӗҫӗшӗн пӗтӗм вӑйа паратӑп

Йӳлӗн 27-мӗшӗнче ТАССР Верховнӑй Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен Хӑнӑс суйлав округ комиссин ларӑвӗ пулса иртрӗ. Кун ларуна Хӑнӑс суйлав округӗ тӑрӑх ТАССР Верховнӑй Советне депутата суйланӑ Григорий Михайлович Гуҫев йӳлташа мандат панӗҫ.

Гуҫев йӳлташ мандат илнӗ чухне калана сӑмахне ҫапла вӗҫлерӗ:

— Маншӑн суйлавҫӑсем ордена Чӑваш республикӑн Верховнӑй Советне депутата суйласа пысӑк чыс туреҫ. Епӗ коммунисла партие-рентсе ӳстернине ҫака чыса ти-вӗсле пултӑм. Сывӑпа та унӑшӑн малтан коммунисла партипе уйӑн ҫулпуҫне. Сталин йӳлташ тӗрӗрен-тӑв тӑватӑп. Суйлавҫӑсем умӗнче тепӗр хут ҫакна калатӑп: —спасиба, хисеплӗ йӳлташсем, мана государства ӗҫне тума шанӑннӑн. Епӗ халӑх ӗҫӗшӗн пӗтӗм вӑйа, пӗтӗм пӗлӗвӗ, кирлӗ пулсан, пурнӑҫа та пама хатӗр. Халӑх ташшӗсемпе пӗр хӗрхенӳсӗр кӗреш-ме пулатап.

Сывӑ пултӑр пирӗн коммунисла парти!

Сывӑ пултӑр пирӗн аслӑ суйлус Сталин йӳлташ!

Фирсӑва, Д. Андрейӗв йӳлташсене Чӑваш АССР Верховнӑй Советне депутата суйлани ҫинчен мандатсем пана

КУСЛАВККА, Йӳлӗн 27-мӗшӗнче Чӑваш АССР Верховнӑй Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен Кусловкка суйлав округӗнчи суйлав комиссин ларӑвӗ пулчӗ. Округри суйлав комиссин ларавӗнче Александрӑ Александровнӑ Фирсӑва йӳлташа Чӑваш АССР Верховнӑй Советне депутата суйлани ҫинчен мандат пана. Мандат илсен Кусловкка, комбинатенчи йаттӑ ста-ханӑвка Фирсӑва йӳлташ ҫапла калана

— Ирӗклӗ совет халӑхӗн тӑрӑн, Верховнӑй Совета халӑх ӑнӑ по-слапӗн пулаҫҫи пек—пысӑк хисеп. Ҫакан пек пысӑк хисеп илме тивӗҫлӗ пулнишӗн епӗ теҫетӗп. Халӑх шанӑҫне епӗ Ленин—Сталин партишӗн чӗререн тӑрса тӳррӗн, хамӑн пӗтӗм вӑйпа пӗлӗвӗ хурса ӗҫленине ӳтветлӗп.

Ҫак кунсенче округа кӗрекен йӑлсенче митингсем пулса иртрӗҫ. Митингсене пынисем пурте коммуниссемпе партире тӑманнисен блокӗ ҫӗнтеришӗн савӑнчӗҫ.

К. Шурйаков.

мӗлйӑрд марк пулнӑ, вӑл Германин империлӗ государствӑ бюджетӗнчен икӗ хут ытларах шутланнӑ. Германи фашисемсем: „Су вырӑнне тупӑсем" тесекӗ лозунг кӑларса тӑратрӗҫ, вӗсем какай, шурӑ ҫӑкӑр тата ытти кирлӗрех продуктасене ҫийӗссине чакарса пыраҫҫӗ, вӗсем хӗрлӗшаллӑланас ӗҫ вӑхӑн, тӗнчери йӑлӑ ҫӗнӗ вӑрҫа вӑхӑн укҫа-тенкӗ ҫӑптӑрса илесӗҫ. Фашисла Итали Абиссиние вӑрсе илнӗ ҫӗре, Испанири вӑрӑхурахла, йӳт ҫӗрсене—туртса илмели вӑрҫа вӑрҫнӑ ҫӗре калама ҫук нумай укҫа-тенкӗ тӑкаклӑрӗ, хальӗ те тӑкаклаҫ. Фашисла пусмӑр Германине Италири ӗҫсынни массисене ҫуклӑха тӑратса хӑварӑт. Ҫак ҫӗршывсенче, капиталисмӑлӑ ытти ҫӗршывсемпе перлеҫ, суклӑхпа ӗҫсӗрлӗх ӳссе пырӑт.

Совет ҫӗршывӗ йӳт ҫӗртен укҫа-тенкӗ парса пулашмасӑрах хӑйӗн социалисмӑлла халӑх хуҫалӑхне туса хучӗ. Епӗр хамӑрӑн укҫа-тенкӗсемпех, хамӑрӑн перекетлӗхсемпех пурантӑмӑр, епӗр социализмла наколлени ҫулӗпе кайрӑмӑр. Пирӗн ҫӗршыври ӗҫсынни-сем хӑйсен ӗҫлесе тунӑ перекетлӗхсен пӗр пайне государствӑна кивҫен парса, совет государствин бюджетне пысӑкӑн пулӑшаҫҫӗ. Ыйтти займсем урлӑ ӗҫсынни-сем пӗрремӗш пилӗкҫуллӑхра хӑйсен государствине 5,8 мӗлйӑрд тенкӗ, иккӗмӗш пилӗкҫуллӑхра—18,8 мӗлйӑрд тенкӗ укҫа панӗҫ.

Капиталисмӑлӑ ҫӗршывсенчи займсемпе Совет Сойузӗнчи государствӑн займӗсем—хушшинче йепле пысӑк ӳйӑрмӑлӑх пур! Займсенчен пухнӑ укҫа-тенкене капиталиссем йӳт ҫӗрсене туртса илмели вӑрҫӑ вӑрҫнӑ ҫӗре, революцилӗ йухӑмла пусарни ҫӗре йӑраҫҫӗ. Капитал ҫӗршывӗсенче кашни ҫенӗ займ ӗҫсынни-сене експлоатацилессине вӑйлатать.

Ӗҫсынни-сем государствине паракан укҫа-тенкӗсем ҫенӗ хатӗрсем, сӑватсем, шкулсем, пуҫлӑ-ҫасем, кану ҫуртӗсем, санаторисем тунӑ ҫӗре, пуянлӑ ҫуртӗсӗр строительствине, шыв пӑркисем, канализаци тунӑ ҫӗре тата коммуналлӑ ытти нушасем вӑйлӑ кайаҫҫӗ.

Капиталисмӑлӑ ҫӗршывсенче шалти займсем—халӑха хирӗҫ пыракан займсем пулса тӑраҫҫӗ.

Пирӗн совет государствин займӗсемсене илнӗ ҫӗре нумай мӗлйун ӗҫсынни-сем хутшӑнаҫҫе. Совет ҫӗршывӗнчи кашни ӗҫсынни, кашни анланулӑ граждани сакна пӗлсе тӑрат: хӑйӗн перекетлӗхӗсен пӗр пайне государствӑна парса, вӑл хӑйӗнтӑван ҫӗршывӗн оборона пултарулӑхӗне экономикӑлӑ хӑватне тӗрекletет, вӑл унан пуйӑлахсене нумайлатат.

1927 ҫулта кӑларнӑ ССР Сойузӗн халӑх хуҫалӑхне индустриализацилемели пӗрремӗш займа 6 мӗлйун совет гражданӗ илнӗ. Ун хыҫҫӑнхи сулсенче займ ҫырӑнакансен хисепӗ тата-сыпписӗр ӳссе пынӗ. Иртнӗ ҫулта ССР Сойузӗн обороннине тӗреклемели займа 50 мӗлйун ҫын ытла ҫырӑннӑ.

Советӑн государствӑ займӗсемсем халӑхшӑн нимӗн чухлӗ те йӑвар мар. Пачах урӑхла, вӗсем ӗҫсынни-сене пысӑк усӑ параҫҫӗ. Кашни ӗҫсынни облигацинсем тӑрӑх выльӑхсем ӗе процентсем илет. Совет займӗсемсене ирӗклӗ ҫеҫ вырнаҫтараҫҫӗ. Коллективлӑн ҫырӑнакан укҫине 10 уйӑх хушшинче тӳлесе татма пысӑк ҫук параҫҫӗ. Пӗрремӗш пилӗкҫуллӑх хушшинче ССР Сойузӗнчи халӑх государствӑн займӗсемсем тӑрӑх (процентсемпе выльӑвсенчен) 582,2 мӗлйун тенкӗ, иккӗмӗш пилӗкҫуллӑхра—2 мӗлйард та 66 мӗлйун тенкӗ доход илчӗ.

Пирӗн займӗсемсене вырнаҫтарнӑ ҫӗрте совет общественнӑйӗ, государствӑ кредичӗпе перекет ӗҫне пулӑшакан комиссисем, профсоюзсем тата ӗҫлӗх перекет кассисем пысӑк выран йышӑнса тӑраҫҫӗ. Пулашу комиссисен задачи — пирӗн государствӑ займӗсемсен тӗллевӗ ҫинчен, всесем социалисӑм строительствинче мӗнле выран йышӑнса тани ҫинчен массӑсене пӗлсе ӑнлантӑрассине пулаҫ.

Малтанхи сулсенче кӑларнӑ государства займӗсем халӑх хушшинче калама ҫук пысӑк ӑнӑҫлӑха сарӑлна. Халӑ пилӗк мелйӑрд тенкӗлӗх кӑларакан Виссӗмӗш Пилӗк ҫуллӑх Займне ӑна кеске сӳркрах вырнаҫтарса петересси пирки те тата ана ҫырӑнса илнӗ ҫӗре мӗлйуншӑн халӑх массисем хутшӑнасси пирки те иккӗленмели ҫук. Ҫакна шантарса тӑраканни вӑл—ӗҫсынни-сен политикӑлла пысӑк ӑнланулӑхӗ, вӗсем социалисӑмӑлла тӑван ҫӗршыва тата Совет власне вӗсӗмсӗр йӳратни пулса тӑрат.

Кашни йӑнланулӑ совет гражданинӗ пирӗн ҫулпуҫ тата учительӗ Сталин йӳлташ капиталисмӑлла йӗрит-тавралӑх ҫинчен тата йӑланах мобилизацилӗ хатӗр тӑма кирли ҫинчен астуттарнине лайӑх астӑват. Виссӗмӗш Пилӗкҫуллӑх Займне ҫырӑнса, епӗр хамӑр ҫӗршыв мобилизацилӗ хатӗр тӑрассине тата ытларах тереклететпӗр, ӗҫсынни-сен куҫуруллӑ тӑрӑвӗпе материалла пурнӑҫне хӑнӑрма пулӑшатпӑр, социалисӑмӑлла хуҫалӑха малалла тем вӑйлатса пыма пулӑшатпӑр, Совет Сойузӗн оборона хӑватне вӑйлататпӗр, мирле пурнӑҫӑн, демократин, социалисмӑлла прогресӑн никам пырса тӗкӗнми крепӑҫӗ пулса тараканӑ ССР Сойузне тереклететпӗр.

Заочниксен ҫеҫсийӗ

Йӳлӗн 1-мӗшӗнче Чӑвашсен государствӑ пединститутӗнчи заочник студентсен ҫуллахи ҫеҫсийӗ пуҫланчӗ. Чылайӑш заочниксем ҫеҫсине пысӑк хастарлӑха килчӗҫ. Сталинла Конституци ҫине сырса кӗтсе илеймерӗ. Хваттерсене ҫинӳй ӗҫлев, канӑҫ тата вӗренӳ ыйтӑвӗсем ҫинче ӗҫлеҫҫӗ. Ӗҫлене хушӑрах хӑйсен пӗлӳне хӑпартса пыраҫҫӗ.

Анчах харлӑрхӑй пӗлӳне ӳстерме тӑрӑшман учителсем те пур-ха. Ҫӑвӑнна ӗнтӗ ҫеҫсине 1200 заочник килмеле пулнӑ пулсан, 760 ҫын ҫеҫ килнӗ.

Институтри заочнӑ вӗрентес тӗлӗшпе ӗҫлекен ҫектӑр та заочниксен ҫеҫсине кирлӗ пек хатӗрленсе ҫеҫ ҫеҫсине ирӗлмерӗ. Хваттерсене ҫитӗнӳллӗ тупса хатӗрлемен. Учебниксем ҫителлӗкӗҫ. Пединститут библиотекинче „Вӑрман ӗнерҫен историйӗ" тата „Ҫӗнӗ истори" предмечӗсемпе пӗр ушебник те ҫук.

А. Нестӗрӑв.

Хаҫат-журналсене вӑхӑтра леҫмеҫҫӗ

КАНАШ. Вакунсем йӳсакан вӑтри рабочисемпе инженерлӑ-техниклӑ работниксем республикре тухакан „Чӑваш Коммунӗ" тата „Красная Чувашия" хаҫатсемпе пысӑкӑн интереслентеҫҫӗ. Анчах сӑватра, ҫавнашкалах Канашра хаҫат-журналсем ҫырӑнтарас тата вӗсене полписчиксене парас ӗҫсене кирлӗ пек йӗркеленеми подписчиксене ҫитӑ кӳрентерет.

Республикре тухакан хаҫатсене сӑватра иккӗмӗш, виҫӗмӗш ӗе тӑваттӑмӗш кунсенче, центрта тухнӑ хаҫатсене илнӗ хыҫҫӑн тин леҫеҫҫӗ. Кун пирки хаҫатсем ҫырӑнтаракан уполномоченнӑйа тата сӑват ҫумӗнчи почтӑ агентӗ ытларах ӑна-лӑбӑсем пыраҫҫӗ. Унта ӗҫлекенсем „епӗр мар, Шупашкар йӑвӑлӑ" тенипех пуҫне ним те тумаҫҫӗ.

Кинӑпи почтӑ та хаҫат-журналсем тӑратас тӗлӗшпе йӑнӑх ӗҫлет. Макарйав йӳлташ „Красная Татария" хаҫат ҫырӑнса илнӗ. Вӑл пер уйӑх хушшинче те 15 номӗр ҫеҫ илнӗ, вӗсене те вӑхӑтра илмен. Кунашкал фактсем мӗнпӗ кӑтартса пама пулаҫ.

Рабочисем хаҫат-журналсене вӑхӑтра вулассӑн. Ку тивӗҫлӗ ыйту. Сыхӑну организацисен вӑл ыйтӑва пурнӑҫа кӗртессине лайӑхӑн йӗркеленеҫҫӗ.

В. Ластӑкин.

Коккинакипе Брйандинский йулташсене Владивостокра кĕтсе илни

ВЛАДИВОСТОК, июлĕн 1-мĕш. Ваксал сумĕнчи площадьте нумай митингсĕмпе демонстрацисене курма, анчах ку митингсем хулари ĕçлĕ предприятисенче, „Мускав" самолетĕн героллă екипажне кĕтсе илнĕ вăтăр-пăхăнăш митинг—чи хаваслă, чи нумай сăнлă митинг пулнă, теме пулать.

Трибунăна пытне пырса çитнĕ мухтавлă сталинла соколсене—ăслăлăх Коккинакине штурман Брйандинскине Владивостокри ĕççынниссем тăвăлăн ала çупса кĕтсе илеççĕ. Мускав—Владивосток районĕ вĕçев хăвалăнтарса тăнă Сталин йултăваш чысласа, хăйăлă вĕçене пурнăçа кĕртнĕ героллсене чысласа хăвасăлăн кăшкăрăнă сасăсем пур пĕрчен те илтĕнеççĕ.

Парти Обкомĕн çекретарĕ Фомичов йăлтăш „Мускав" самолетăн командирне—Владимир Коккинакине сăмах парать. Темиçе минут хушши вăл ăшшăн кулса, овация лăпланасса кĕтсе тăрать.

— Йултăшсем,—тет Коккинаки,—епĕр çăртсем-тусем урлă, тундрасем урлă, вăрмансем урлă, тайга урлă—Мускавран вĕçсе тухнă хыçăн 24 сехетрен хăмăр совет самолучĕсен çунатĕсем çинче хĕрлĕ столицăри—Мускаври— ĕççынниссенчен хĕрлĕ салам илсе килтĕмĕр!

Самайах йăнăр пулчĕ пирĕн вĕçев, анчах вăл пире хăратман. Вĕçев умĕн пире Сталин йăлтăш: „Пĕр талăкра Приморйене вĕçсе çитме пултаратăр-и?" терĕ. Епĕр çапла ответ патăмăр: „Есть, пĕр талăкра вĕçсе çитмелĕ", терĕмĕр. Пĕр талăк иртсен епĕр кунта пулнă.

Пирĕн вĕçев çакăн çинчен калаç: инçетри Хĕвелтухăç Мускавран, нумайĕшĕсемшĕн туйăнна пекех инçетрĕ мар. Пирĕн вĕçев çакăн çинчен калаç: кирлĕ пулсассăн, сирĕн мирлĕ ĕçе сыхламашкăн, хамăран хаклă социализмăлă тĕнчăн çĕршывĕ сыхламашкăн кунта пиншер совет самолучĕсем килсе çитĕç.

Овация лăпланă хыçран, штурман Брйандинский тухса калаç. Нумай пин сăнлă митинг Брйандинский йултăш калăнине пысăк тимлĕхпе итлет, час-часах алă çупса унăн сăмахне пулăт.

Лăпкă океан флочĕне хулари ĕççынниссен лачĕне герой-лоччисене Лăпкă океан флочĕн Çăр Советĕн члĕвĕ, корпус комиссарĕ Волкăв йултăш саламлать.

Çăвăн ĕçлекĕ хулари пионерсемпе комсомолĕçсен, Ворошилăв йăхĕне тăрăкан савăтри рабочисен представительĕсемпе те саламлă сăмахсем тухса калаççĕ. (ТАСС).

Йут çĕршывсенчи пичет Коккинаки-вĕçевĕ çинчен

ПАРИЖ, июлĕн 30-мĕшĕ (ТАСС). „Се суар" хаçат Коккинаки портретне пысăклатса пичетлесе кăларнă, хаçат Мускав—Владивосток районĕ хушшинче пĕр лармасăр чăплăн вĕçсе тухниçинчен тĕлĕнсе çырать.

Чăпла вĕçев çинчен илнĕ пĕлтерусене „Попюлер", „Пепль", „Пти Журналь" хаçатсем те пичетлесе кăларнă.

Испани правитĕлстви Англи правитĕлстви патне йанă нотă

ПАРИЖ, июлĕн 30-мĕшĕ (ТАСС). Еспань агентстви Барçелонăран пĕлтерет тăрах, Испанин йут çĕршыв çĕçĕсен министерстви çакăн пек пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă: Испанин Лондонри посолĕ Аскарата хăйĕн правительствăн хушнине Англин йут çĕршыв çĕçĕсен министерствине нота пана. Çав нотăра Испани правительстви пăхăвăсен авиацийĕ июлĕн 29-мĕшĕнче Бланес хули çине бомбăсем пăрахнине комиссие—вăл комиссие туни çинчен Англи правительстви хăйĕн июлĕн 24-мĕшĕнче йанă нотинче пĕлтернĕ,—сийĕнчех пĕлтерлеме тытăнтăр, тесе хушнă. Германине Италин авиацийĕ, пăхăвăсен службинче тăрса,—тенĕ нотăра,—Бланес хули çине бомбăсем пăрахнине унта лăпкă çурăнакан хăлăхсен хушшинче 9 çын вилнĕ тата 39 çын аманнă. Çак инсĕр ĕçлĕн кăсару пулма пултараймасть, тесе пĕлтерет Испани правительстви, мĕншĕн тесен Бланес хулинче нимĕнле вăрçа обйекчĕсем те çук.

Поļшăра фашисăма хирĕç кĕрешекенсене тĕрмене хупаççĕ

Поļшăри Ровно йăтлă хулара фашисăма хирĕç кĕрешекен 29 çынăн политикăлă пысăк процесĕ пĕтнĕ, вĕсене коммуниспа партине ĕçне хутшăнса ĕçленĕ тесе айăпланă. Сут айăпланакансенчен пĕрне 12 çул хушши тĕрмере хупса усрама пригăвăр йышăннă.

(ТАСС).

Пăлхавçăсем валăри çĕнĕ подкрепленисем

ПАРИЖ, июлĕн 29-мĕш (ТАСС). Испань агентстви пĕлтернĕ тăрах, Тетуанăри 1.500 марокашĕш Çĕнĕ Испани çар бюджетне Устерет

Токио, июлĕн 29-мĕш. „Ници-Ници" хаçат Японин çарпа флот бюджетне килес çултан пуçласа ӳтересли çинчен çырать. Хаçат пĕлтернĕ тăрах, Японин çарĕсене вĕçĕпшăллантарас пилĕкçулăхпа планне тепĕр хут пăхса тухаççĕ. Çар вăхăчĕсем бюджет тăрăх сывлăшăри вăйсене ӳрлăхлатса çĕнĕтме 99 мĕлйун иен, вĕçĕпшăлланассине лайăхлатма—64 мĕлйун иен тата оборонă ĕçне çирĕплетме—140 мĕлйун иен ыйтаççĕ. Ситес бюджет çулĕнче çар валăри 560 мĕлйун иен çĕнĕрен хушса памала пулать. Çак çулта çĕнĕ самолетсем, карапсем тата тинĕс базисем тума укçа нумай кирлĕ пулать, тесе çырать хаçат.

(ТАСС).

Фашисăма хирĕç выступлением

ПРАГА, июлĕн 30-мĕш. Германири тĕрлĕ вырăнсенчен пĕлтернĕ тăрăх, ĕççыннисем фашисла диктатурă йĕркине килĕшмессĕр часăсăр фашисăма хирĕçле массăлă выступленисем туса иртереççĕ. Чехословакире чикĕлĕ Германи Силезинче йулашки ернеçнеле массăлă стачкăсем пуллă. Глейвицри вăçе шахтă рабочийĕсем вырăнти лавкасене çусĕм илсе килмесĕр ĕçлеместĕр, тесе стачкă тунă. (Глейвицра маргарин тупма та май çук). Стачкă икĕ куна пынă, унта национал-социалисла хăшпĕр организацисен члĕвĕсем те хутшăнна. „Королева Луиза", „Счастье Людвига" тата ытти шахтăсенче те рабочисем, фашисăмăн тискер террорне пăхмасăрах, ĕç фронче" пухнă пухусенче хăйсен ыйтăвĕсемшĕн уçăнах тухса калаçнă. Çак кунсенче, çавнашкăл пухусенчен пĕринче рабочисем саланса кайнă. Пуху уçăлас умĕн фашисла комиссар пренисенче калаçма ӳкарнăçĕ, тесе пĕлтернĕ. Çапла калану хыççăн рабочисенчен нумайрахĕш пайĕ пухуран пăрахса тухса кайнă.

Иртнĕ ернеçре Кельн хулинче пулса иртнĕ çак факт та питĕ интереслĕ. Пасара пынă килхӳçи хĕрарăмсем темиçе хут çĕр-шывăн хыттă шавлăра протеслеççĕ. Вĕсем патне чĕнсе пынă полицийĕ хирĕç килхӳçи хĕрарăмсем çапла калана: „Сите! Епĕр чăн-чăн çу çийĕçшĕн, кун пек шăпăлă пăкăçа мар. Кун пек „çу" епĕр вăрçа вăхăтĕнче çирĕмĕр", —тенĕ. Полици килхӳçи хĕрарăмсене хăваласа саланă, хĕрарăмсем хутне кĕме пасара пынă рабочисем тата хресченсем пĕрлешĕç. Питĕ тĕлĕмеле, вырăнти фашисла хăвасăлăн пасарта-пулса иртнĕ демонстраци çинчен пĕлтерет, „çу" пахалăхĕ нечар пулнăн тата шăршăлă пулнăн сылтăм „çав хаклă продуктсене ӳкрепре сыхланă" хĕрарăмсем сине йăвантарнă.

(ТАСС).

Йапонире çил-тăвăллă шарлак çăмăрсем çунă

ТОКИО, июлĕн 1-мĕш (ТАСС). Японире çил-тăвăллă шарлак çăмăрсем вĕçĕ кун хушши çунă, вĕсем питех те пысăк сийен кĕнĕ. Японии кĕвелтухăç пайĕнчи сакăр префектурине çав çăмăрсем çунипе 134 çын вилнĕ, 132 çын аманнă тата ним хыпарсăр 8 çын пĕтнĕ. 498 çурт пĕтĕмпех е пĕлĕсене аннă тата 638 çурт кăштах сийенленнĕ. 361 кĕпере шыв ӳхтарса кайнă.

Токио—Осако чукунçул линийĕ çĕмĕрĕлнĕ. Вăл-çул тăрах пуйăссем çуреме чăрăннă.

Пуринчен ытла çав вăйăла çилтăвăллă шарлак çăмăрсенчен Идзу утравĕн хĕвеланăç ĕнчи çыранĕсем сывăхинче пуранăнсем пысăк сийен курнă.

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНАВ.

ССРС ФИНАНС ХАЛĂХ КОМИССАРИАЧĔ

ССР Союзĕн Государствăн Страхованин Тĕп Управленийĕ

Килсуртри пурлăхсене вут-кăвартан, çăл-çăçăм çаппине, сиксе сирпĕнинпе, шыв шăпине, çĕр чĕтренине сийенленсен, çил-тăвăлран, шарлак çăмăртан, ураганран, çăрт-тусем ишĕлсе аннинпе тата çĕрĕн çийелти сийĕ шуса кусиннен пулăнан сăнлă çĕнĕлĕн ирĕкпе ĕçлеме страхăламалли

ВĂХĂТЛĂХ ПРАВИЛАÇЕМ

Сталинла икĕ пăтăлетăкăсене анăçăн пурнăçланă хăмăр çĕршывăри ĕççынниссен пурнăçне халиччен пăхăçан пулман чухлех лайăхлатса пăчĕ.

Партипе правительствăн ССР Союзĕнчи ĕççынниссене пуйăн та культурăлă пурăнмала ӳтуса пачĕç.

ССР Союзĕнчи ĕççынниссен харпăрхăçă усă курмали йапаллисене асла Сталинла Конституци сăхласа тăрат.

„Гражданăсем хăйсен ĕçлеме тивĕçлĕ доходсеме перекетлăхсем тĕлĕшпе, пурăнмали çурт тăвăтăкăлли хушма хуçалăх, килсуртра тытăкаламăлли йапаллисем, харпăрхăй уçă курса тăракан йапаллисемпе ăрлăксем тĕлĕшпе гражданăсен харпăрхăйăлăх правине, çавăн пекех тата гражданăсен харпăрхăлăх халăл правине сакăнмăн сыхласа тарат" (ССРС Конституцин 10-мĕш статйи).

Ĕççыннисенĕн пурăнăçне малалла лайăхлатма пулăшакан ĕçсенчен пĕри вăл—килсуртри пурлăха ирĕклĕ ĕçĕркене страхласси пулса тăрат.

I. Мĕнле пурлăхсене тата ăнсăртран пуланăн мĕнле инкекпончен страхлама пулать

1. 1938 с. февралĕн 3-мĕшĕнче йышăннă 111-мĕш №-лĕ постановлени тăрăх государствăн страховани органĕсем Совет Союз гражданĕсен, çавăн пекех тата ССРС территорийĕнче пурăнакан ураххĕсен граждансен килсуртри пурлăхне (килсуртра кирлĕ çĕтед-пукан таврашсене, тумтире, кĕпе-ĕме, музыка инструменчĕсене, çĕвĕ çĕлемели машинсене, радиоустанокăсене, кĕнекесене, картинăсене, йăлхуçалăх продуктисен тата вутăанăкă запасĕсене; врачсен, инженерсен, асăлăх работникĕсен шăл тĕрлетмели, медицина, физикă т. ыт. кабинечĕсенчи тĕрлĕ ăнтĕрсемпе интрументсене; ларса çĕремели йапаллисене: автомобильсене, мотошикăлсене, велосипедсене, екипажсене т. ыт. те) ирĕклĕ ĕçĕркене страхлаççĕ.

Çав правилăсем тăрăх тата урăх çĕршывсен ССР Союзĕнчи фирмисен тата представительствăн инвентарĕсеме тĕрлĕ хатĕрĕсене те страхлама илеççĕ.

АСАРХАТТАРНИ: Тĕрлĕрен документсене, актсене, адсырăвĕсене, укçа-тенкĕçсене, хăвăл хутсене, хăвăл йышши чулсене, пăтăнăн, кĕмĕлĕрен тата ытти тĕрлĕ хăвăл материалсенчен тунă йапаллисене—страхлама илмеççĕ.

2. Çавăн пекех тата ломбардсем, комиссионнăй магазинсем, транспорт организацийĕсем, прачечнăйăсем, гостиницăсем, театрсем, уйрăм çынсен йапаллисене вăхăтăха сыхласа усрама илĕкĕн ытти организацисен тата заказ паракансен материалĕсенчен тумтир çĕлесе паракан, заказпа йусаса паракан мастерскойсем те пурлăха страхлама пултараççĕ.

II. Госстрах ответлăхĕ

3. Госстрах страхланă пурлăх çак инкекссене пула сийен кĕнине йе пĕтнине пулнă убытăксемшĕн ответлă пулса тарат:

а) пушартан, аçа-çăçăм çаппинчен, сиксе сирпĕнинчен (аçа-çăçăм çаппине тата сиксе сирпĕнинпе пушар тухман пулсан та), шыв шăпинчен, çĕр чĕтренинчен, çил-тăвăлран, вăйăл çăмăртан, ураганран, çăрт-тусем ишĕлсе аннинчен тата çĕрĕн çийелти сийĕ шуса кусиннен пулăнан убытăксемшĕн;

б) пушар вăхăтĕнче йе урăх кăтартă урăх инкек вăхăтĕнче пурлăха вăрланине тата пурлăх çухăлнине пулăнан убытăксемшĕн тата

в) пушар вăхăтĕнче йе урăх инкек вăхăтĕнче хăтарнă чухне пурлăх пĕтнине йе сийенленнине, çăмăрăнине: шыв лекнине, çĕмĕрĕлнине т. ыттине пулăнан убытăксемшĕн.

III. Мĕн чухлĕ суммăлăх тата мĕнле срупнăха страхлаççĕ

4. Пурлăха кирек мĕн чухлĕ суммăлăх та страхлама ирĕк парат, анчах пурлăх государствăн тата кооперацин хăкĕнче мĕн чухлĕ тăнинчен хăкăлрах хурса мар тата пурлăх кивелсе йĕнĕлнĕ хака страхованин суммине кĕртмелле мар. Йăлхуçалăх продуктисем мĕн чухлĕ тăнине колхоз паçăрĕнчи хăйсене кура хăкăлаççĕ. Уйрăм йапаласем тĕлĕшпе çирĕплетсе хунă государства тата кооперации хăкĕ çук пулсан, страховкă суммине страховой органăнсем палăртаççĕ.

5. Пурлăха пăхса тухса та пăхса тухмасăр та страхлаççĕ.

Ĕççыннисен пурлăхне пăхса тухмасăр çавăн пек страхлама пултарассăр: семĕлĕ сынсене 10.000 тенкĕлĕх таран, пĕчĕн пурăнаканнисене 6.000 тенкĕлĕх таран.

Çакăнта кăтартиннăн пысăкрах суммăлăх страхланă чухне малтан пурлăха пăхса тата сырса тухаççĕ.

6. Килсуртри пурлăха пĕр сулăхран кайа мар срука страхлаççĕ.

Малтан пурлăха тулли çак хурса страхланă чухне йе страхланă хыçăн сĕнĕ йапаласем туйăнна чухне страховани тунă çын кирек мĕнле вăхăтра та хăйĕн пурлăхне çĕнĕрен пăхса тухса страхлама пултарат, унччен иртнĕ вăхăтра тĕлĕнĕ суммăна инкĕмĕш хут страхласан та тĕлĕнĕ шутрах пулат.

IV. Страховнă тĕлевĕсен ставникĕсем

7. Страховкă тунă суммăн кашни пĕр пин пуçлех страховкă тĕлевĕсене çулталăкра çакăн пек ставкăсем тăрăх тĕлесçĕ:

1) Хуласенче тата рабочи поçолкăсенче (администрацин тĕлĕшĕнчен хăйсене уйрăм йĕлиннăй пулса тăракансенче):

Чулран тунă тата вут-кăвара парăнман сивнипе сурт-сенче 1 тенкĕ —

Чулран тунă, тăррине вут-кăвара парăнакан йапалана витнĕ тата хуташ сурт-сенче 2 тенкĕ —

Ытти сурт-сенче:

а) вут-кăвара парăнман йапалана витнĕ сурт-сенче 2 тенкĕ те 30 пус.

б) вут-кăвара парăнакан йапалана витнĕ сурт-сенче 4 тенкĕ —

2) Йăлти вырăнсенче тата дачăлă поселкăсенче:

а) РСФСР тăрăх (Ордженокидзе тата Краснодар крайĕсене, Дагестан, Бурйат-Монгол, Çурçĕр-Осетин, Чечен-Ингуш, Кабардино-Балкар, Крым тата Калмык АССР-сене тата Ростов облăçĕ ку шута кĕмĕççĕ), УССР-ри Киевĕн, Житомир, Черниган, Винницăн тата Каменец-Подольск облăçĕсене:

в) вут-кăвара парăнман йапалана витнĕ сурт-сенче 6 тенкĕ —

вут-кăвара парăнакан йапалана витнĕ сурт-сенче 9 тенкĕ —

б) Ордженокидзе тата Краснодар крайĕсене Дагестан, Бурйат-Монгол, Çурçĕр-Осетин, Чечен-Ингуш, Кабардино-Балкар, Крым тата Калмык АССР-сене тата Ростов облăçĕсене (РСФСР), Молдавин АССР-ре, Харьков, Одессă, Днепропетровск, Полтава, Николаевск, Сталинск тата Ворошиловград облăçĕсене (УССР), Казах тата Киргиз ССР-сенче:

вут-кăвара парăнман йапалана витнĕ сурт-сенче 4 тенкĕ —

вут-кăвара парăнакан йапалана витнĕ сурт-сенче 6 тенкĕ —

в) Грузин, Армян, Азербайджан, Узбек, Таджик тата Туркмен ССР-сене:

вут-кăвара парăнман йапалана витнĕ сурт-сенче 3 тенкĕ —

вут-кăвара парăнакан йапалана витнĕ сурт-сенче 4 тенкĕ —

3) Йăлти вырăнсенче Совет Союзĕн геройĕсен, СССР Союзĕн орденĕсеме йе революцине чапла хĕçпăшăлпа наградăлана сынсен, ĕç геройĕсен тата социалăн обеспеченире тăракан сынсен, çавăн пекех тата йăлхуçалăхĕне çыхăнса тăман тата йăлхуçалăх налогĕ тĕлемен рабочисеме служăщисемĕн инвалидсем пурлăхĕсене страхланă чухне страховкă тĕлевĕсене хуласенчи тата рабочи поçолкăсенчи сынсен инвалидсем пурлăхне страхланăшăн тĕлемели тариф тăрăх илеççĕ.

Чукунçул транспăртĕн сурчĕсенчи тата чукунçул çĕрĕ çинчи, сурт-сенчи инвалидсем пурлăхĕсене страхланă чух та страховкă тĕлевĕне хуласăн тата рабочи поçолкăсемшĕн çирĕплетнĕ тарифлă ставкă тăрăх илеççĕ.

АСАРХАТТАРНИ: 1. Вут-кăвара парăнман сивнитти тесе: листăлă тимĕр, тимĕр рамкăлă кĕленче, черепица, бетон тата шифер сивнитти шутлаççĕ.

2. Совет Союзĕ геройĕсен, СССР орденĕсеме тата революцине чапла хĕçпăшăлпа наградăлана сынсен, ĕç геройĕсен тата социалăн обеспеченире тăракан сынсен, çавăн пекех тата ирĕклĕ пушар дружини членĕсен пурлăхĕсене страхланă чухне, вĕсене 7-мĕш параграфăри 1-мĕш тата 2-мĕш пунктсенче кăтартнă тĕлев хакĕсене чакарса 20 процент скидка парассĕ.

3. Прачечнăйăсем, ремонт тăваканта сăвĕ çĕлекен мастерскойсем страховкă тĕлевне çулта çирĕплетнĕ ставкăсем тăрăх 50 процент хушса тĕлесçĕ.

V. Страховани тумалли йĕрке тата страховкă тĕлевĕсене тĕлемели срунсем

8. Пурлăха Госстрахăн хуласенчи управленийĕсем, районсенчи тата хуласенчи страховой инспекцисем тата страховой агентсем пурлăх хуçи сăмахăна кăлаçа йĕ хут сине сырса панă çайăлени тăрăх страхлама йышăнаççĕ.

9. Пурлăха уйрăмпăрăн та тата колективлă йĕркепе те страхлаççĕ.

10. Рабочисен, служăщисемĕн, колхозниксен пурлăхĕсене коллективлă йĕркепе страхланă чухне пĕтĕм предприяти, учреждени, совхоз, МТС, колхоз, промерел тăрăх йе цехсем, бригадăсем, управленисем, уйрăмсем тата ытти производствăлă звеносем тăрăх пурлăха пăхса тухмасăр страхлаççĕ, вĕсенче ĕçлекенсем 20 сыпран кайа пулмала мар.

Коллективла страхованнине пурăнакан вырăн тăрăх-суртсем тăрăх та тума пулат, кун пек чухне хватертре пурăнакансем 50 сыпран кайа пулмала мар.

Коллективла страхованнине ĕçлекенсене 50 процентран кайа мар çавăрса илнĕ сĕрте тĕлевсен хакне 10 процент чакарассĕ, 75 процент ĕç ытларах та çавăрса илнĕ сĕрте —20 процент чакарассĕ.

АСАРХАТТАРНИ: Пурлăхсене коллективла йĕркепе страхланă чухне страхланă сынсем страховани тĕлевне пĕтĕмĕшпех тулеске татнă хыççăн страховани саккунла пулат.

11. Страховкă тĕлевĕсене пĕтĕм страхланă срукшăн малтанах тулеске татаççĕ.

12. Пурлăха страхланине çапла йĕркеллеççĕ: страховой тунă кашни сынпах страховой инспекци [illegible] пусна квитанцин парассĕ (пурлăха коллективлă йĕркепе страхланă чухне те савăн пекех тăваççĕ).

13. Çав страхланă пурлăхсемшĕн Госстрах ответлă пулса тăрасси квитанци çинче кăтартнă числари 24 сехет синчен пуçланат, страховани срукĕ тухсан çав числарах 24 сехет иртсен Госстрах ответлă пулса тăрассу пĕтет.

14. Госстрах органĕсем страхланă пурлăх хакне тĕрĕслесе пăхма тата пурлăх мĕнле инкекне пăхса тухма пултараççĕ.

VI. Пурлăхне страхланă çынăн тумалисем

15. Пурлăхне страхланă çынăн вут-кăвартан сыхланас правилăсене пурăнăса кĕртсе пымала.

Тĕрĕслеме чухне пурлăхне страхланă çын вут-кăвартан сыхланас правилăсене пăхнине палăртассăн, Госстрах страхованнине чарса лартма пултарат.

16. Пушар йе урăх инкек пуласа иртни çинчен страховкă тунă çын хăй, йе унăн вырăнне йулнă çынăн страховой инспекцине (пурлăх ăста пулнă çав вырăн тăрăх) 3 кун хушшинче сырса пĕтерес пулат тата çуна кайнă сийенленнĕ йе вăрласа кайнă йапаласен списькине тăрастас пулат, унта кашни йапалан хакне (инкек пулнă кун мĕн хак тăнă шутпа) кăтартас пулат.

Пулса иртнĕ инкек çинчен страховкă тунă çын çакăнта кăтартнă срукра пĕлтермессĕн, Госстрах страховой суммăн кăсене тулемесĕн те пултарат.

АСАРХАТТАРНИ: Инкек вăхăтĕнче йапаласен сухални тата вĕсене вăрласни çинчен страховкă тунă çынăн милиции органĕсенче пĕлтермелле.

17. Пушар йе урăх инкек вăхăтĕнче пурлăхне страхланă çынăн страхланă пурлăха хăтарас тĕлĕшпе, пурлăха татах сийенленесрси сыхлас тĕлĕшпе мĕн тума кирлине йăлтах тумала.

Страховкă тунă çын çакăнта кăтартнă ĕçсене тумасассăн, пысăкланса кайнă убытăкшăн Госстрах ответлă пулса тăмасăр.

18. Страхланă пурлăха тепĕр вырăна куçарассăн, страховани тунă çапплех йулат.

Пурлăха тепĕр вырăна куçарни çинчен страховкă тунă çын страховой инспекцине (пурлăха хăш вырăна куçарăр савăнти инспекцине) пĕлтерсе хума тивĕç.

АСАРХАТТАРНИ: Вăхăтăнах куçарма (дачăна кайнă чух, командировкăна кайнă чух т. ыт. тĕ) пурлăх хакĕ страхланă пурлăхсен 30 процентĕнчен мĕнпăрах мар пулсан, страхланă çын çинчен Госстрах органĕсене пĕлтерсе хумасан та пултарат.

Страхланă пурлăха йăвăç-сурт-сене йăвăçлă-чăдăй сурт-сене куçарнă пулсан страхланă çынна страховкă тĕлевне мăлăшшăн тулеппине тавăрса параççĕ.

Страхланă пурлăха чул сурт-сене йăвăç-сурта йе йăвăçлă-чăдăй сурта куçарнă чухне страховкă тунă çынăн страховкă тĕлевне хуласа тулеммине 5 кун çурма тытăнмала.

Убытăкпа палăртăнан акт çине страховой инспектăр, страховкă тунă çын тата ыткă çынтелĕк алă пусаççĕ. Хуласенче вĕсемсĕр пусне, тата çурт управленийĕ представительĕ алă пусат.

VII. Госстрах мĕнле чухне убытăксене тулемест

19. Страхланă пурлăх страховкă тунă çын айăппе, уйрăлса каласан, вут-кăвара пит те асăрхануçăр тытăкланинпе йе йăрийех хăй çунтарса йăнипе пĕтнĕ пулсан Госстрах убытăксене тулемест.

Страхланă çын убытăкпа пысăклатас тесе тĕрĕс мар счет тăратнине, хăтарса хăварнă йапаласене пытарса хăварнине тата инкек пулса иртнĕ вырăнта пулман йапаласене опăсе кĕртнине палăртсан Госстрах убытăксене тулемест.

Йурийех çапла тунине кайран, убытăксене тулеме хыççăн палăртнă пулсан тулене суммăна кайалă, шыраса илеççĕ.

АСАРХАТТАРНИ: Страховкă тунă çын йурийех çапла киревсĕр ĕç тунине тата вăл айăпланне суд ĕç çулĕсем çинче палăртаççĕ.

VIII Убытăксене палăртасси

20. Страховкăшăн тулесси страховкă тунă суммăран пысăк пулма пултарамаст. Убытăк мĕн-пысăкăш пулнине пĕтнĕ ĕç сийенленнĕ пурлăх пушар ĕç урăх инкек пулнă çын чăнинне мĕн чухлĕ тăнине шута илес палăртаççĕ.

Сийенленĕнĕ йапаласем страховкă тунă çын аллине, Госстрах представительĕ страховкă тунă çынна килĕштерсе хакланă шутпа, йулассĕ.

21. Убытăксене палăртнă чухне страхланă çынпа килĕшӳ çук пулсан, пĕтнĕ ĕç сийенленнĕ пурлăх мĕн хак тăнине Госстрах представительĕ тата икĕ çыдетел палăртаççĕ.

22. Пушар ĕç урăх инкек вăхăтĕнче пурлăха хăтарас тĕлĕшпе пулнă убытăксене, кайран сыхласа усрас тĕлĕшпе тата вĕсене йĕркелеске хурас тĕлĕшпе пулнă расхусене Госстрах тулет. Анчах вăл расхусем, страховкăшăн тулеппине пĕрле илсе шутласан страховкă тунă суммăран пысăк пулма пултараймаççĕ.

23. Государствăн страховани органĕсем пушар ĕç урăх инкек пулни çинчен пĕлтернĕ хыççăн хуласенче 3 кун иртичен, ытти вырăнсенче—5 кунран кайа

Уполномоченный Чувашглавлита № 331

ССРС Финанс халăх комиссарĕн çĕнĕ заместителĕ Д. ШАТАЛАВ.

ССРС Госстрах Тĕп Управленийĕн начальникĕ А. ВЛАСАВ.

1938 с. июлĕн 10-мĕш.

№ 331/151.

Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. заказ № 581.